КУН-ÇУЛ

# ÇУТĂ СĂНАРĔ МАНĂÇМАСТЬ

## /М.Трубина çыравçă çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май/

*"...Мĕн пур вăй-хална çĕршыва халалларăн,*
*Мухтавлăн кăтартрăн чăваш çыннине,*
*Авал хурлăхра çеç пăчланнă хĕрарăм*
*Паян мĕнле чаплă ĕçсем тунине..."*

**/А.Артемьев. Трубина Мархвине: сăвă** ***//Ялав. 1948. 9 №. 18 с./.***

МАРФА Дмитриевна Трубина /Трубина Марфи/ – чăвашсен ача-пăча литературине пуçарса яракансенчен пĕри. Авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 120 çул çитет.

Чăваш патшалăх пичет архивĕнче Трубина Марфин 28 кĕнеки, пултарулăх хĕлхемĕпе шăранса тухнă сăввисемпе юмахĕсем, калавĕсемпе повеçĕсем упранаççĕ, паян та тĕпчевçĕсене шухăшлаттараççĕ, çамрăксене ĕçчен те ырă кăмăллă, ăслă, хăюллă пулма вĕрентеççĕ, вулакансен чĕринче ырă туйăмсем çуратаççĕ. Хĕрарăм çыравçă çинчен çырнă паха материал та сахал мар кунта.

М.Д.Трубина 1888 çулта Куславкка районĕнчи Аслă Куснар ялĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн 1903-1909 çулсенче Чĕмпĕрти учительсене хатĕрлекен чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Кунта вăл К.Иванов, Н.Шупуççынни сăвăçсемпе, Ф.Павлов, С.Максимов композиторсемпе хутшăннă. Вырăс çыравçисен И.С.Тургеневпа Л.Н.Толстой, А.С.Пушкинпа Н.В.Гоголь хайлавĕсемпе паллашнă. А.В.Кольцов поэзийĕпе çунатланса хăй те сăвăсем çырма тытăннă. М.Трубинан чи малтанхи сăввисем – "Елик" /1906/, "Вилĕм", "Чухăн çын" /1908/. Виçĕ сăввинче те хура халăхăн тертлĕ пурнăçне сăнланă.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн çамрăк вĕрентекен Çĕрпӳ районĕнчи Çырмапуçĕнчи земство шкулĕнче, ун хыççăн ĕмĕр тăршшĕпех хăйĕн тăван ялĕнчи шкулта ĕçленĕ. Шкул ачисен вăйĕпе алăпа çырса "Шкул кунĕсем" журнал кăларса тăнă. Унта шкул пурнăçне çутатнă, сăвă-юрă пичетленĕ.

1919 çулта çамрăк çыравçăн Хусанта "Чăваш юмахĕсем" кĕнеки пичетленсе тухнă. Кунта халăхра сарăлнă 6 юмаха кĕртнĕ. "Шурăмпуç", "Сунтал", "Канаш", "Çамрăк хресчен", "Ĕç хĕрарăмĕ", "Трактор" хаçат-журналта сăввисемпе калавĕсем тăтăшах пичетленме тытăннă. "Энтӳçпе Маруç", "Çуркунне", "Утă вăхăтĕнче", "Кĕркунне", "Хĕр хуйхи" сăввисенче автор чăваш çамрăкĕсем, вĕсен телейсĕр шăпи çинчен çырса кăтартнă. Трубина Марфин пултарулăхĕ прозăра та вăй илнĕ. Кунта хăй калас тенине уçăмлăраххăн та çивĕчреххĕн, анлăраххăн çавăрса илсе сăнарсене витĕмлĕрех кăтартнă. "Эрех çулĕ", "Пасар кунĕ" калавсенче çыравçă кивĕ йăла-йĕркене питленĕ, "Хăнаран", "Вупăр", "Микул турра хĕнени" калавĕсенче кивĕ йăлапа кĕрешме чĕннĕ, çĕнĕ саманан паллисене сăнланă.

Ача-пăча литературин никĕсне хывас тата ăна аталантарас тĕлĕшпе вăл нумай вăй хунă. "Пукани", "Автан авăтать", "Куян юрри", "Марук чăххи", "Кăсăя" сăввисем ачасене туслă пулма, ĕçе юратма вĕрентнĕ. "Хĕрлĕ галстук", "Ача-пăча сăввисем", "Марине", "Пĕчĕк бригадирсем", "Асăнмалăх, савăнмалăх" кĕнекисенче те тĕп геройсем – ачасем. Çур ĕмĕре яхăн шкулта ĕçленĕскер шăпăрлансен шухăш-кăмăлне, ĕмĕчĕсене, туртăмĕсене лайăх пĕлнĕ. Тăван çĕршыва юратма, халăхшăн тăрăшма, ĕçчен те ырă кăмăллă, çулăмлă патриот пулма хавхалантарнă. М.Трубинан хайлавĕсем çамрăк ăрăва тарăн пĕлӳ парас ĕçре пысăк вырăн йышăннă. Çавăнпа та унăн нумай хайлавне шкул программине кĕртнĕ.

Çыравçăн пултарулăхĕнчи тепĕр пысăк тема – хĕрарăмăн кун-çулĕ. Асаплă та хĕнхурлă пулнă ĕлĕкхи хĕрарăмăн пурнăçĕ. Самана пусмăрне те, çемьери тан марлăха та тӳссе ирттерме тивнĕ унăн. "Малалла" повеçри Настук, "Ĕç тухмарĕ" калаври Мариç, "Мучар" повеçри Аннушки, "Хӳт вырăнта" повеçри Санюк тата ытти сăнар та çакнах кăтартаççĕ. Хĕрарăм çĕнĕ пурнăçшăн епле кĕрешнине те сăнланă çыравçă. Кĕçĕн çулхи ачасем те, шкулта вĕренекенсем те, кил-хуçи хĕрарăмĕ те унăн произведенийĕсенче тивĕçлĕ вырăн тупнă.

Педагог тата çыравçă драма хайлавĕсем те çырнă. "Çĕр чĕлхи", "Килет", "Телейсĕр хĕр" пьесăсенче вăл 1917 çул хыççăнхи чăваш ялĕнчи класс кĕрешĕвне сăнланă. "Çĕнтерчĕ" пьеси вара 1927 çулта уйрăм кĕнекен çапăнса тухнă.

Унăн чи паллă ĕçĕ – "Ача чухнехи" повеç. Ăна вăл хăйĕн пурнăçĕн юлашки çулĕсенче сывлăх хавшанă чухне автобиографи пулăмĕсене тĕпе хурса çырнă. Кунта автор хăй мĕнле кил-йышра, ăçта çуралнине, И.Я.Яковлев патне тухса кайнă, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ вăхăта, мĕн курни-илтни, тӳсни çинчен йĕркипе çырса кăтартнă. Унта 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш ялĕн сăн-сăпачĕ те анлă сăнланнă. Малтан çак хайлав 1955 çулта "Тăван Атăл" журналăн 2-4-мĕш номерĕсенче сыпăкăн-сыпăкăн пичетленнĕ, 1960 çулта уйрăм кĕнекен кун çути курнă. Повеçе чăвашсен паллă çыравçи Л.Агаков çапла хакланă: "Трубина Марфин "Ача чухнехи" повеçĕ пирĕншĕн хаклă произведени пулса тăрать. Тĕрĕссипе каласан авалхи чăваш ялне, чухăнсен ун чухнехи асаплă пурнăçне, ял куштанĕн тискерлĕхне кăтартса парас тĕлĕшрен ку повеç "Нарспи" хыççăн пĕрремĕш вырăнта" / Л.Агаков "Лайăх повеç" // Тăван Атăл. 1958. 1 кĕн. – 97 с./. Çакăнтах 94-мĕш страницăра: "Чăвашсен ача-пăча литературинче Трубина Марфи пултарулăхĕ паллă вырăн йышăнать. Тӳрех каламалла – пирĕн ачасем валли çыракан писательсенчен нихăшĕ те ун чухлĕ ĕçлемен. Ачасене ун чухлĕ паха кĕнекесем туянтарман..."

Трубина Марфин иксĕлми пултарулăхне ытти çыравçă та пысăка хурса хак панă:

"Марфа Дмитриевнăна лайăх пĕлетĕп. Тĕлĕнмелле сăпайлăхĕпе, ыр кăмăллăхĕпе, пултарулăхĕпе илĕртетчĕ..." / Г.Ефимов "Çепĕç кăмăл халь те асра" // "Çил çунат". 1999. 9 №. – 2 с./.

"Трубина Марфи чăваш халăхĕшĕн вут пек çунса, ырă, пархатарлă ĕçсем нумай тунă пулин те, хăйне çав тери сăпайлă тытатчĕ. Калаçасса ялти чăн-чăн хĕрарăмсем пек тӳлеккĕн, шăкăл-шăкăл пуплетчĕ. Кирек мĕнле йывăр саманара та вăл кăшкăрнине курман эпĕ. Хăйне пысăка хумастчĕ... Ăна пурте, пурте хаклатчĕç..." / В.Алентей "Пирĕн çăлтăр" // Пионер сасси. 1988, авăн,10/.

Халăха вĕрентес тĕлĕшпе нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Трубина Марфине Ленин орденĕпе, "Ĕçре палăрнăшăн" тата "1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн" медальсемпе, Хисеп грамотисемпе наградăланă. РСФСР тата Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ те вăл.

Сăмах ăсти пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа 52 çул иртрĕ. Апла пулин те унăн хайлавĕсем халĕ те пурăнаççĕ, вулакансене савăнăç кӳреççĕ, ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен пуянлатаççĕ. Малашне те унăн çутă сăнарĕ чăваш халăх асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнасса шанас килет.

■ **Е.АРЛАНОВА,**
**Чăваш Республикин патшалăх пичет архивĕн пай пуçлăхĕ**

АЙТУРАХ

# ТАВĂРАС ТЕРĔÇ-ШИ?

ВĂТĂР çул каялла Сурăм вăрманĕнчен кӳрсе килнĕ ăвăса пураласа вите тунăччĕ. Кăçал чӳрече айĕнчи чи пысăк пĕренене темиçе çĕртен темскер шăтарнине асăрхарăм.

– Шĕкĕ тапăнчĕ-ши çурта? – калаçатăп хампа хам. – Шĕкĕ тĕк "çăнăхĕ" вĕтĕ пулмалла-çке.

Тепĕр кун ирех тухса çав тăрăха сăнама тытăнтăм. Акă сывлăм типнĕ çĕрелле шăтăксенчен сăпсасем вĕçевĕçе тухма тытăнчĕç.

– Мур илесшĕсем! Хуралтăна пĕтеретĕр-çке эсир, – тесе çĕр улми нăррипе кĕрешмелли шĕвеке кăшт шывпа хутăштартăм та шăтăксене ярса тухрăм. Шалтан темиçе сăпса вĕçсе тухма ĕлкĕрчĕ пулмалла. Татах пур-ши унта? Тен, путланчĕç. Пĕлместĕп. Маларах тухнисем каялла таврăнчĕç. Анчах шăтăксене вĕçсе кĕмерĕç, мана сырса илчĕç. Икĕ вите хушшинчи тăраллă хӳтлĕхе аран чупса кĕтĕм, унтан – пӳрт умне. "Лăпланччĕр-ха кусем кăштах", – тесе çур сехет пек тăхтарăм та пахчана тухрăм. Утма памаççĕ сăпсасем: шăршăран е кĕпе-тумтиртен палласçĕ тейĕн.

Виçĕ кун çапла асапланса пурăнтăм. Çăла шыв ăсма та кăлармаççĕ. Тепĕртакран таçта кайса çухалчĕç.

Хĕвел тухăç енчи пĕренене те шăтара-шăтара "вĕлле" тунă сăпсасем. Шăтăкĕсене вĕт чул чиксе тухрăм, пысăкраххине хăмапа питĕрме ĕлкĕртĕм. Ĕçлесе пĕтернĕ çĕре сăпсасем таврăнчĕç те тӳрех мана тапăнчĕç: ниçта кайса кĕме çук. Ĕç тумтирĕ юрать питĕ пулчĕ, пуç çинче – шлепке. Унсăрăн мĕн курнă пулăттăм. Пӳрт ум алăкне çăра çакнине пула урамалла тухса тартăм, пĕве хĕррине чупрăм. Çавах çăлăнăç пулмарĕ. Шыва сикрĕм. Пуçа шыва чике-чике илсе сăхтармарăм. Çапла пĕр çур сехет шывра ларнă çĕре сăпсасем вĕçсе саланчĕç. Анчах виçĕ кун кил картине аран-аран кĕтĕм. Алăк умĕнчен каймаççĕ. Мĕнле палласçĕ-ха вĕсем хăйсене сăтăр тăваканa? Шалт тĕлĕнетĕп.

■ **Осип АЛЕКСЕЕВ**

# ÇАКНАШКАЛ ПУРНĂÇРАН ЫВĂНСА ÇИТНĔ

**МУСКАВРИ 54 çулти хĕрарăм 24 çул упăшкипе пурăннă хыççăн çемйине сыхласа хăварайманнипе кулянса хăйĕн çине алă хунă.**

**Тĕп хулари аслă вĕренӳ заведенийĕн преподавателĕ юратнă упăшкипе тата ывăлĕпе уйрăлнине чăтса ирттереймен. Вĕсем ун патĕнчен çулталăк каялла кайнă. Следстви çирĕплетнĕ тăрăх, хĕрарăм хăйне вĕлерессине тĕплĕн шухăшласа палăртнă. Хваттерти мĕн пур чӳречине уçнă, хăйĕн çине бензин сапнă, ыратнипе кăшкăрас мар тесе çăварне çĕтĕк чикнĕ. Çакăн хыççăн хăйне тивертсе янă.**

**Пушар тухнипе взрыв пулнă, çывăхри хваттерсенчи кантăксем веçех ваннă. Чрезвычайлă лару-тăру министерствин сотрудникĕсем хĕрарăм виллине ваннăйра тупнă. Хĕрарăм вилес умĕн çыру çырса хăварнă, çывăх çыннисенчен каçару ыйтнă, "çакнашкал пурнăçран ывăнса çитни" çинчен пĕлтернĕ.**

02 СЛУЖБА

# "ПИРĔН ĔÇ ТЕ ИНТЕРЕСЛĔ"

**Паянхи кун милиционер ĕлĕкхи пекех хисепре-и? Унăн ĕçне интереслисен шутне кĕртме пулать-и? Йĕркене пăсакансен йышĕ чактăр тесе мĕнле çĕнĕлĕхсемпе усă курать вăл? Çак тата ытти ыйту тавра калаçрăмăр эпир ЧР ШĔМĕн Шупашкар хулинчи милицин патрульпе пост службин полкĕн командирĕпе Юрий Бычков подполковникпа. Сăмах май, асăннă полка йĕркеленĕренпе авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче 85 çул çитет.**

"ТĔП хулари виçĕ район çумне пĕрер батальон çирĕплетнĕ. Çапла майпа территорие, унта пурăнакан халăха лайăхрах пĕлме май парать. ЧП тавраш пулас тăк кашни батальонран пĕрер взвод яланах хатĕр тăрать, талăкĕпех службăра пулать. Патрульпе пост службин сотрудникĕсен тĕп тĕллевĕ – граждансен хăрушсăрлăхне тивĕçтересси, общество йĕркелĕхне сыхласси, административлă правăна пăсакансене тупса палăртасси... Милицин патрульпе пост службин хăйĕн тĕллевĕсене криминал милицийĕпе, Шалти ĕçсен министерствин ытти службипе, йĕркене сыхлакан ытти органпа килĕшсе, пĕрле ĕçлесе пурнăçлать.

Паянхи кун полк йĕркеленсе çитнĕ, професси енчен çӳллĕ шайри çынсене чăмăртанă подразделени шутланать. Кирек епле тĕллеве те пурнăçлама пултарать вăл. Ĕçри тивĕçе пурнăçланă чухне паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн полкри чылай сотрудника ведомство тата патшалăх наградисемпе чысланă", – паллаштарать Юрий Валерианович.



Çакна та палăртмалла: Чăваш Ен ШĔМĕн милици отрячĕ /ăна асăннă полк сотрудникĕсенчен йĕркеленĕ/ Çурçĕр-Кавказ регионĕнчи хĕрӳ вырăнсенче ĕçлĕ командировкăра 40 хут пулнă. Чăваш милиционерĕсем унта хăюлăхĕпе, çирĕплĕхĕпе палăрнă. Кашни отряд яваплă командировкăран Чăваш Республикин Президенчĕн ячĕпе çырнă тав çырăвĕпе таврăннă. Полкри 150 сотрудника çар тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн, хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн орден-медальпе, Хисеп хучĕсемпе, Раççей Президенчĕн Тав çырăвĕпе чысланă.

Юрий Бычков пĕлтернĕ тăрăх, милицин патрульпе пост службин тĕп хулара йĕрке тума талăкра 200-210 сотрудника явăçтарать. Милиционерсем 16 стационарлă тата 35-40 çуран постсенче службăра тăраççĕ, 22 автопатруль хăйсене шаннă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлать. Кунсăр пуçне хулан кашни районнех куллен "Шырав" ушкăнри автомашина экипажне параççĕ.



Полкра паян 500 ытла çын. Çав шутра 20 ытла хĕрарăм. Патрульпе пост службин сотрудникĕсене, авланман каччăсене общежитипе те тивĕçтереççĕ. Çемьеллĕ пулсан хваттер черетне тăма, ачана садике вырнаçтарма пулăшаççĕ.

"Пытармалла мар, маларах милиционерсем пирки хитре мар сăмахсем калакалатчĕç, халĕ вĕсене ытларах шанма, хисеплеме тытăнчĕç. Патрульпе пост службин милиционерĕ участковăй пекех урамра çӳрет, халăх куç умĕнче ĕçлет. Хăюлăхĕпе, тавçăрулăхĕпе палăрать вăл. Мĕн пур ыйтăва регистрацилет, мерăсем йышăнать.

Ман шухăшпа, милици ĕçĕ питĕ интереслĕ, мĕншĕн тесен эпир çынна пулăшатпăр. Тухтăрсем çынна сиплеççĕ, вĕрентекенсем пĕлӳ парнелеççĕ, çакăнпа мăнаçланаççĕ, эпир вара йĕркене пăсакансене тытса, суд умне тăратса явап тыттарнăшăн хĕпĕртетпĕр. Çынна хӳтĕлесси питĕ яваплă ĕç.

Кăçал тĕп хулари кашни районта йĕркене пăсни сахалланни, паллах, пире савăнтарать. Юлашки 7 уйăхра йĕркене пăснă 442 тĕслĕхе регистрациленĕ /пĕлтĕр ку тапхăрта 507 шута илнĕ/. Ют пурлăха çаратни те пĕлтĕрхипе танлаштарсан сахалрах пулнă.

Ĕçри çĕнĕлĕхсемпе те усă куратпăр. Сăмахран, пирĕн сотрудниксем 6 скутерпа, 2 лашапа, мотоциклсемпе усă кураççĕ", – паллаштарать Юрий Валерианович.

Патрульпе пост службин ĕçченĕсем ĕçлес хастарлăхĕпе кăна мар, спортри çитĕнĕвĕсемпе те палăраççĕ-мĕн. Вĕсем çăмăл атлетикăпа, икĕ енлĕ кĕрешӳпе Раççейри тата республикăри ăмăртусене хутшăнаççĕ, малти вырăнсене йышăнаççĕ. Кунта спорт мастерĕсем те, спорт мастерĕн кандидачĕсем те пур. Çурла уйăхĕн 18-22-мĕшĕсенче ав куçса çӳрекен кубокшăн батальонсен хушшинче мини-футбол вăййисем иртнĕ. Хĕрӳ тупăшура 1-мĕш батальон çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

Çĕртме уйăхĕнче республикăри "Професси ăсти" конкурсра патрульпе пост службин милиционерĕ Виталий Петров сержант 1-мĕш вырăн йышăннă.

Асăннă полкра Ветерансен канашĕ те пур. Унăн ĕçхĕлне маларах полк командирĕ пулнă Александр Иванович Захаров йĕркелесе пырать. Сăмах май, общежитири йĕркене пăхса тăрассине те ăнах шаннă.

"Эпир хамăрăн организацие 2001 çулхи ака уйăхĕн 9-мĕшĕнче йĕркелерĕмĕр. Пирĕн тĕп тĕллев – çамрăк сотрудниксене пулăшасси: инструктаж панинчен пуçласа çемье пурнăçĕ таранах. Паллах, ветерансен ĕçĕхĕлне те çутатма тăрăшатпăр, тĕл пулусем ирттеретпĕр. Кĕçех полк музейне йĕркелесшĕн. Хальхи вăхăтра ветерансен канашĕнче 63 çын шутланать. Вĕсене пухма питĕ йывăр, мĕншĕн тесен ветерансем Раççейĕпех саланнă, çирĕмĕн те пулин уява килеççех пулĕ тетĕп", – ĕмĕтне пытармарĕ Александр Иванович.

Паян патрульпе пост службин чылай ĕçченĕ Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвне, медальсемпе хаклă парнене тивĕçĕ. Милиционерсем уявранах ĕçе кайĕç.

■ **Роза ВЛАСОВА**

АС ТĂВĂМ

# «АН ЙĔР, АННЕ — ЭПĔ ЧĔРЕХ!»

**Нумайăн вĕсем – Чечня вăрçинче çамрăклах пуç хунă ентешсем. Пурнăç çулĕ çине хальтерех тăнисем, анчах пурăнса курайманнисем. Юратма ĕлкĕрейменнисем. Йăха малалла тăсма пӳрменнисем. Анчах вĕсене пĕр туртăм пĕрлештерет: йывăрлăхра пуç усман ăру çыннисем вĕсем – çĕршыв умĕнчи таса тивĕçе пуринчен мала хурса вутçулăма кĕме хатĕр çамрăксем. Ильмир Закиров калашле, асаттесен сăваплă çĕрĕ вĕсене нихăçан та асран кăларас çуккине ĕненекен ПАТТĂРСЕМ.**

## Алексей ВЛАДИМИРОВ

**/03.02.1974-01.01.1995/**

УНТАНПА 13 çул ытла иртрĕ пулин те Çĕнĕ Шупашкарти Владимировсемшĕн аслă ывăлĕ Алексей халь-халь киле чĕррĕн кĕрсе тăрассăн туйăнать: таçта кăшт тытăнса тăнă тейĕн. Тем пек кĕтсен те – çапла пулаймĕ: унăн пурнăçĕ Чечня вăрçинче татăлнă.



*● А.Н.ВЛАДИМИРОВ.*

– Питĕ йăрă ачаччĕ, çирĕп сывлăхлăччĕ. Шкула кайиччченех вулама вĕренчĕ, шашка-шахматпа питĕ кăсăкланатчĕ, – пĕртте çăмăл мар амăшне чун тĕпренчĕкĕ çинчен иртнĕ вăхăтпа калаçма. – 1981 çулта пĕрремĕш класа кайрĕ. Вĕренме кăмăллатчĕ, чи юратнă предмет – математикăччĕ...

Çавăнпа пĕрлех спорт та уншăн чун туртăмĕ пулнă. Шкулта ăс пухнă тапхăрта тĕрлĕ ăмăртăва хутшăннă, яланах малти вырăнсене йышăннă. Шанăç паракан ачана тренерсем те асăрханă, çиччĕмĕш класс хыççăн тĕп хулари спорт шкулне куçма сĕннĕ. Кĕçех спортăн темиçе енĕпе пĕрремĕш разряд нормативне тултарнă çамрăк.

Алексей яланах çĕннишĕн çуннă, ытларах пĕлме тăрăшнă: 1989 çулта Çĕнĕ Шупашкарти химипе технологи техникумне вĕренме кĕрет. Çав вăхăтрах автошкулта водитель ăсталăхне туптать. 1993 çулхине, халĕ çеç дипломлă пулса тăнă çамрăк специалист, çар тумне тăхăнать. Хĕсмет вырăнĕ – Оренбург облаçĕнчи Тоцк. Вăхăт сисĕнмесĕрех иртет: политикăпа тактика занятийĕсем, нарядсемпе çар вĕренĕвĕсем. Пултаруллă чăваш каччи командирсен приказне хăвăрт тата тĕрĕс пурнăçланипе, дисциплинăна çирĕп пăхăннипе палăрать. Киле кĕске вăхăтлăха отпуска килсе кайма та тивĕçет вăл.

Килтисем Алексейăн юлашки çырăвне 1994 çулхи чӳк уйăхĕнче илеççĕ, унтанпа – нимĕнле хыпар та. "Каярахпа тин ывăлăма 1994 çулхи раштавăн 9-мĕшĕнче Самара, тепĕр тăвата кунран мотострелоксен 81-мĕш полкĕн йышĕнче Грозный хулине куçарнине пĕлтĕмĕр, – терĕç ашшĕпе амăшĕ, Николай Мефодьевичпа Юлия Николаевна. – 31-мĕшĕнче, Çĕнĕ çул умĕн, асăннă полка Чечен Республикин тĕп хули тулашĕнчи чукун çул вокзалне штурмлама приказ панă. Атака вăхăтĕнче юнашарах пысăк калибрлă снаряд шартлатса çурăлать. 1995 çулхи кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен ывăлăмăра хыпарсăр çухалнисен йышне кĕртеççĕ. Кун çинчен пире нарăс уйăхĕнче кăна хыпарларĕç. Официаллă хут 1996 çулхи раштавăн 14-мĕшĕнче тин çитрĕ". Ӳтне, вилнĕ хыççăн тепĕр 5 çултан кăна, 2000 çулхи нарăсăн 4-мĕшĕнче, тирпейлесе пытарнă.

## Михаил АНДРЕЕВ

**/20.09.1975-02.01.1995/**

ÇĔНĔ Шупашкарта çут тĕнчене килнĕ Михаил Андреев кунçулĕ тантăшĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть: вăхăт çитсен хулари 12-мĕш вăтам шкула кайнă, тăххăрмĕш класс хыççăн химипе технологи техникумне вĕренме кĕнĕ, 1994 çулта техник-технолог дипломне илнĕ. Спортпа кăсăкланнă. Икĕ метр çӳллĕш каччăна баскетбол тата волейбол вăййисем кăмăла кайнă. Çемье тĕрекĕ пулнине те ялан асра тытнă: ашшĕне йывăр чир вăл пĕрремĕш курсра вĕреннĕ чухнех пурнăçран уйăрнă.



*● М.Н.АНДРЕЕВ.*

Миша техникумран вĕренсе тухнă хыççăн тепĕр эрнерен повестка илнĕ. Призыв комиссийĕ вăрăм та яштак, сăнран илемлĕ каччă Хисеп хуралĕн ротинче хĕсметре тăма тивĕç тесе йышăннă. Самарти çар чаçĕнче уйăх хыççăн уйăх иртнĕ. Кĕçех – дембель. Çук, каялла выртман ун çулĕ: хĕсмет вăхăтне вĕçлекен салтаксемпе сержантсене суйласа илсе вĕсен пысăк ушкăнне Чечняна ăсатнă. Çĕнĕ çул каçĕнче пĕрремĕш çапăçăва кĕнĕ вĕсем. Чылайăшĕ сывă тухайман вăрçă çулăмĕнчен. Кĕçех Çĕнĕ Шупашкара усал хыпар çитет: "БМП оператор-наводчикĕ Михаил Николаевич Андреев аслă сержант çар тивĕçне пурнăçланă чухне хыпарсăр çухалнă" текен йĕркесем ашшĕ-амăшĕн чĕрине сăнă пек тирĕнсе кĕреççĕ. Килĕшмест çакăнпа амăшĕ, чун тĕпренчĕкне шырама Чечняна тухса каять. 11 уйăх шырать вăл ăна: ăçта кăна пулмасть, кампа кăна курса калаçмасть? Вăрçă хĕрушлăхне чун витĕр кăларса хăй те чутах чĕресĕр пулса лармасть. Вун пĕр уйăхран ывăлĕн ӳтне Дон çинчи Ростовра тупать. Паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă, Паттăрлăх орденĕн кавалерĕ М.Н.Андреев Çĕнĕ Шупашкарти çăва çинче яланлăхах канăç тупать.

## Алексей КУДИКОВ

**/04.12.1978-26.11.1999/**

ЫВĂЛĔ çинчен сăмах пуçарсан Елена Николаевна пĕр самант шăп ларчĕ. Алексей ачалăхĕ, иртнĕ кун-çулĕ куç умне тухрĕ ахăртнех. Вăрçăра тата тĕрлĕ çивĕч хирĕç тăрура вилме çуратмасть амăшĕ ывăлне: телей курма тата кӳме, йăха малалла тăсма, çĕршывшăн юрăхлă çын пулма тăхăр уйăх чĕри айĕнче йăтса çӳрет, пысăк шанăçпа çут тĕнчене илсе килет. Шупашкар хулине кĕрекен Кăнтăр поселокĕнчи Кудиковсен ĕмĕчĕ-тĕллевĕ таса пулнă: çуртне те хăпартнă, йывăçне те лартнă, ывăлне те çуратнă. Сăмах май каласан хĕрпе те пуян-ха вĕсем.

Алексей поселокри 28-мĕш вăтам шкулта тăххăрмĕш класчен вĕреннĕ. Ашшĕ йывăр чирленипе ыттисемпе пĕрле урăх çӳреймен пĕлӳ тĕнчине. Хăвăртрах пĕр-пĕр специальноç алла илсе ĕçе вырнаçас ĕмĕтпе хулари 12-мĕш профтехучилищĕрен вĕренсе тухса электросварщик свидетельствине илет. Практика вăхăтĕнче хăйне пур енчен те ырăпа кăтартнă çамрăка 1852 автоколонна коллективĕ хавассăх йышăнать. Ашшĕ вилсен те хуçалма памасть. Пурлăхпа та пулăшать, сăмахпа та. Салтак ячĕ тухсан тăван йыш пек пулса тăнă коллективах килессе шантарса çар тумне тăхăнать. Чыслăн ăсатаççĕ ĕçтешĕсем ăна.



*● А.В.КУДИКОВ.*

Чĕрĕ-сывă таврăнма пиллеççĕ. Ростов облаçĕнчен килне те, ĕç коллективне те ăшă сăмахсемлĕ çырусем тăтăш килеççĕ. Хĕсмет вăхăчĕ çур çул юлсан унран юлашки çыру инçетри Дагестанран çитет: "Эпир Чечня Республикин чиккинче тăратпăр..." Пĕррехинче задание кайсан вĕсен БТРне засадăри боевиксем персе тивертеççĕ. Перкелешӳре йывăр аманнă А.Кудиков тыткăна лекет. Тарма тăнă вăхăтра тăшман пульли унăн пурнăçне татать. Кĕрен берет тăхăнма тивĕçнĕ чăваш каччине çапăçури хăюлăхшăн Паттăрлăх орденĕпе наградăлаççĕ.

Пĕррехинче амăшĕ ывăлне тĕлĕкре курнă: "Ан йĕр, анне – эпĕ чĕрех". Чăннипех паттăрсем вилмеççĕ.

## Ильмир ЗАКИРОВ

**/04.01.1975-01.01.1995/**

ЧУНĔПЕ чăваш мар пулин те, чăваш çĕрĕ çинче çуралнăран химиксен хули уншăн тăванран та тăван пулнă. Салтакăн йывăр хĕсметĕнче те вăл ентеше вăй-хал парса тăнă. Хăйĕн килне янă çырăвĕсенче 1982 çулта хăй пĕрремĕш класа кайнă саманта, çав çулхи авăн уйăхĕн тăваттăмĕш кунĕнче вилнĕ ашшĕне, 14-мĕш профтехучилищĕне чи лайăх паллăсемпе вĕçленине, салтакчченхи пурнăçра çырăнса юлнă нумай ырă пулăма час-час аса илнине пĕлтерет.

– Юлташ нумайччĕ унăн. Асăну каçне килнĕ тусĕсене малтанах шăнăçтараймарăмăр та, – тет амăшĕ Дана Закирова. – Çар комиссариачĕ умне ăна ăсатма хамăр пурăнакан кварталти пур çын та пынăн туйăнчĕ. Вăл автобуса ларни те, алă сулни те паян та куç умĕнчех...

Ильмир Самар хулинчи мотострелоксен 81-мĕш полкне лекнĕ. Ывăлĕ хĕсметре тăнă вăхăтра амăшĕ унта пĕр хут çеç мар кайса килнĕ. Юлашки хут 1994 çулхи юпа уйăхĕн вĕçĕнче пулнă. Ун чухнех Ильмир амăшне хăйсен полкне Чечняна ăсатасси çинчен пĕлтернĕ. Раштавăн 14-мĕшĕнче полк Моздок хулине çитнĕ, кунтан пĕтĕм çар техникине Грозный хулине куçарнă. Раштавăн 31-мĕшĕнче хĕсметре çулталăк та пулман салтаксене Чечен Республикин тĕп хулине илме приказ панă. 1995 çулхи кăрлачăн пĕрремĕшĕнче, 14 сехетре, Ильмир Закиров кĕçĕн сержант тата унăн юлташĕсен БМПи йывăр снаряд лекнипе çунма тытăнать. Никам та хăтăлаймасть вут-çулăм тыткăнĕнчен – пурте чĕрĕллех çунса каяççĕ, пурне те Паттăрлăх орденĕпе наградăлаççĕ.

Ильмирăн вырăсла çырнă çырăвĕпе мана та паллашма тӳр килчĕ: "...Пирĕнтен механик-водительсем хатĕрлерĕç. Турă хăтартăрах тем сиксе тухасран – хăватлă çар техникине хальлĕхе çӳретме те пĕлместпĕр. <...> Анне, манăн пурте йĕркеллĕ. Пăшăрханса чĕрӳне ан ыраттар. Кĕçех, кăрлачăн 4-мĕшĕнче, манăн çуралнă кун тата эпĕ çар тумĕ тăхăннăранпа 10 уйăх çитет. Май пулсан посылка ярса пар. Юлташсене çав кунсен ячĕпе чейпе хăналас кăмăл пур. Раштавăн 14-мĕшĕнче çыратăп ку çырăва. Чипер юлăр, эпĕ те чиперех". Вĕçĕнче сăвă йĕркисем: "Отчизна славы и мужества, Святая земля отцов, Если дали завьюжатся, Вспомни юных бойцов..."



*● И.И.ЗАКИРОВ.*

■ **Юрий ЛИСТОПАД**